# Иван Мучи ҫинчен

## (аса илӳ)



Чӑвашсем ҫапла каланӑ: юлташу хӑвӑнтан лайӑх пултӑр. Ҫак ылтӑн сӑмахсем ман пурнӑҫра ытла та тӳрре килчӗҫ. Хамӑн ман темле ҫитменлӗх те пур. Ятлакан пулман та, ҫамрӑкрах чухне эпӗ чӗлӗмпе те ашкӑннӑ, эрех те ӗҫсе пӑхнӑ т.ыт.те. Ҫапах телейлӗ ҫын эпӗ, мӗншӗн тесен чи лайӑх ҫынсемпе, ӑста писательсемпе туслӑ пулнӑ. Вӗсенчен пӗри Иван Мучиччӗ.

Ӑна эпӗ пур енчен те пӗлетӗп тени – суйни пулӗччӗ. Ҫынна тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлсе ҫитме унпа пӗрле ҫичӗ пӑт тӑвар ҫимелле теҫҫӗ. Эп ӑна чылай енчен курнӑ тесен тӗрӗсрех пулӗ. Иван Мучисем патӗнче эп хваттерте те пурӑннӑ. Халь шеллетӗп ҫавӑншӑн – чӑрмантарнӑ ҫынна. Иван Мучипе пӗрле «Капкӑн» журнал редакцийӗнче ӗҫленӗ. Кун пек калани те тӗрӗсех мар пуль. Литературӑра кӑшт сӑмсаланма тытӑннӑскер, эпӗ «Капкӑн» журнал редакцийӗнче Иван Мучипе пӗр вӑхӑтра ӗҫленӗ, унран ҫырма та пурнӑҫ пурӑнма вӗренесчӗ тенӗ. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче «Капкӑна» вӑхӑтлӑха хупсан Иван Мучипе пӗрле Кӗнеке палатинче ӗҫленӗ.

Чӑваш театрӗ тапраннӑ тапхӑрта Иван Мучи актер пулнӑ теҫҫӗ. Лайӑх актерччӗ текенсем те пур. Эпӗ вӑл кирек ӑҫта та хӑйӗн ӗҫне тӗплӗ тума юратнине пӗлетӗп. Аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче Иван Мучи Чӑвашсен академи театрӗнче тата тепӗр хут ӗҫлесе пӑхрӗ. Вӑл вӑхӑтра ун шӑм-шакки кӑштах хытнӑччӗ пулас ӗнтӗ, театрта пуҫа килсен пушмак тенӗ пек кӑна ӗҫлетчӗ. Ирӗксӗртен. Нушапа. Эпӗ ӑна унта та тӗл пулкаланӑ.

Ҫаксене пурне те шута илсен манӑн Иван Мучи пирки кӗске асӑну сӑмахӗ калама тивӗҫӗм те пур-и, тен.

Чи малтан сӑнӗнчен пуҫлар пуль. Ытти ҫынсенчен ярт уйрӑлса тӑракан этемччӗ вӑл, ҫак кулӑш ӑсти, капкӑнҫӑ, паспортри ячӗпе Иван Иванович Илларионов, вулама пӗлекен пур чӑвашсемшӗн – Иван Мучи писатель. Пысӑк пит-куҫлӑ, хулӑн туталлӑ, мӑн сӑмсаллӑ ҫӳллӗ ҫын. Ача чунлӑ улӑп. Пӗрремӗш хут курнӑ чухнех ҫын кӑмӑлне тыткӑна илекен асамҫӑ. Мӗнпе туртатчӗ вӑл ҫынсене хӑй патне? Хӑйӗн тӳрӗлӗхӗпе. Йӑваш кӑмӑлӗпе. Чееленме пӗлменнипе.

Пурнӑҫ пӗр тикӗс шунӑ чух Иван Мучирен ӗҫчен ҫын та ҫукчӗ пуль. Мӗн те пулин сиксе тухсан, пурнӑҫ ӳпне-питне ҫаврӑнса кая пуҫласан вӑл шалтӑрах аптраса ӳкетчӗ.

Ҫынсемшӗн Иван Иванович тем тума та хатӗрччӗ. Кирлӗ пулсан, ҫийӗнчи кӗпине те хывса паратчӗ. Тархасшӑн. Усса ҫеҫ пытӑр. Хальтерех ялсенчен килнӗ хваттерсӗр ҫыравҫӑсене хӑй патне пуҫтарса усратчӗ. Эпӗ ҫавӑн пеккисенчен пӗри пулнӑ та ӗнтӗ.

Анчах хӑйшӗн мӗн те пулин тумалла, тӑрӑшса ҫӳремелле, такамран тем ыйтмалла тесен унран мӗскӗн те ҫукчӗ. Вырӑссем калашле, хӑйшӗн хыпса ҫунасси ютчӗ унӑн. Ӑна вӑл путсӗр ӗҫ тесе шутлатчӗ. Йӗркеллӗ сывӑ ҫыннӑн чи малтан ыттисемшӗн тӑрӑшмалла. Вара тин хӑйне аса илмелле. Чи юлашкинчен. Вӑхӑт юлсан.

Ҫынсене ятланӑ чухне – «йӑлтах урӑхла». Малтан хӑв ҫине ҫаврӑнса пӑх. Айӑпӗ хӑвӑнта мар-и? Ҫынсем тунӑ йӑнӑша эсӗ те туман-и?

Бюрократсемпе, карма ҫӑварсемпе, тӗрлӗ ӑҫтиҫуксемпе калаҫнӑ чух Иван Мучи вӗсемшӗн вӑтанса тӑратчӗ вара. Хӑйне юрама хӑтланса пӗкӗрӗлсе ҫӳрекенсене килӗштерместчӗ. Тӳрӗ ҫын, ӗҫчен, вӑл пурне те ҫавӑн пек курасшӑнччӗ.

/Сӑмах май каласан, Иван Мучи – «Капкӑн» журнала пуҫаракан, ун редакцийӗнче ӗҫленӗ вӑхӑтра вӗсен хваттерӗнчен ҫын татӑлмастчӗ. Хӑш-пӗрисем хӑйсенчен ыйтмасӑрах вӗсем патӗнче выртса тӑратчӗҫ. Иван Мучи хӑҫан ҫуралнине, хӑҫан мӑшӑрланнине таран пӗлетчӗҫ. Вӑл сӑмахне калама ӗлкӗричченех кулатчӗҫ. Кӗреке тулли халӑхчӗ, пӳрт тулли кулӑ. Иван Мучи ӗҫрен тухрӗ те ҫав хавас ҫынсемех чи малтан тарса пӗтрӗҫ.../

Ҫапла ҫынсемпе ҫав тери сапӑрччӗ Иван Мучи, сӑпайччӗ. Ӑна ним мар кӳрентерме пулатчӗ. Юлташӗсем-артистсем пулӑшмасан ялта апат та тупса ҫиейместчӗ вӑл. Анчах журналта унран принциплӑ ҫын пулман. Унта вӑл патшалӑх ӗҫне тунӑ-ҫке, парти политикине тытса пынӑ. Пурнӑҫри йӑх-яхсемпе ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешетчӗ вӑл, тӑшмансене курайместчӗ. Хаҫатсене малти статьяран тытӑнса пӗлтерӳсем таранччен вулатчӗ. Паллӑсем тӑва-тӑва хӑваратчӗ. Ку темӑпа карикатура тутарас, ку шухӑша кӗске калаҫура усӑ курсан та ҫитет тетчӗ вара. Пире ҫивӗч материалсем тупма хушатчӗ.

Вӑл панӑ заданисенчен пӗр-иккӗшне астӑватӑп. Капла калани тӗрӗсех те мар пуль-ха вӑл. Иван Мучи приказсем парса шавласа ҫӳренине курман эп. Курма та пултарайман. Ун пек ҫын марччӗ вӑл. Кӑвакарчӑн пӗр-пӗр чӗр чуна пырса сӑхма пултарайман пекех, Иван Иванович та сассине хӑпартма пӗлместчӗ. Хӑйне ҫынсенчен уйрӑм тытасси те ҫукчӗ унӑн. Анчах ҫапла пулсан та, вӑл ыттисенчен аслӑраххине, кунта вӑл асли иккенне пурте туятчӗҫ. Дистанцие те ҫухатмастчӗҫ...

Ҫапла хушмасӑрах ӗҫлеттерме пӗлетчӗ вӑл пире. Ӑна ун сӑмахӗнчен сисеттӗмӗр эпир. Ӗҫ тунипе туманнине те аса илтерсе тӑмастчӗ. Ӗҫне тунӑ ҫын хӑех калатчӗ ӑна...

Иван Мучи тутарас тенӗ ӗҫсенчен пӗр-иккӗшне астӑватӑп терӗм-ха эпӗ. 1939 ҫулта «кивӗ» «Капкӑн» редакцийӗнче ӗҫлеме тытӑнсан пулчӗ вӑл. Пӗр йӑпӑлти чунне уҫса памалли меслет тупнӑччӗ Иван Иванович. Лешӗ, йӑпӑлти хӑйӗн пуҫлӑхӗ патне «пысӑк» ҫыру ҫырнӑ-мӗн. Пыл та ҫу тултарнӑ унта. Юратать те иккен вӑл пуҫлӑхне. Хисеплет те ӑна т.ыт.те. Ӳксе пуҫ ҫапманни ҫеҫ.

Ҫырӑва ӑнсӑртран ҫурса пӑрахаҫҫӗ. Хайхискер, юлнӑ татӑкӗн пысӑк пайне вуласа пухаҫҫӗ те – йӑлтах хирӗҫле пулса тӑрать. Малтан йӑпӑлтатнӑ пулсан пуҫлӑхне халь ҫӗрти-ҫӳлтимӗнпе вӑрҫса пӗтернӗ. Каламан сӑмах хӑварман. Шампа та иккен вӑл. Кӗвӗҫ чун та. Уй тӑмани те. Темӗн те.

Хӑтланкаласа лартӑм эп ҫав хамелеон-ҫырупа, анчах майлаштарса ҫитерейместӗмӗр.

Иван Мучи хӑй те тупайманччӗ пулас, журнал страницисем ҫинче ун пек япала пичетленсе тухнине астумастӑп.

«Капкӑн» хуҫи ҫӗрле тӑра-тӑра ларнине, тутине чаплаттарса, хӑй тӗллӗн тем пӑшӑлтатнине, тем чӗре-чӗре хунине темиҫе те курнӑ эп. Шултра почеркпа васкамасӑр ҫыратчӗ вӑл. Пирус нумай туртатчӗ. Чей ӗҫетчӗ.

Ҫавӑн пек каҫ хыҫҫӑн пӗррехинче ӗшеннӗ Иван Иванович мана ҫапла каларӗ:

– Кам та пулин пулӑшма килӗшсенччӗ! Пур инкекрен хӑтӑлса тухакан, хӑйӗн тӑшманӗсене ухмаха тӑратса хӑваракан Кукша Иван пирки кулӑшла кӗнеке ҫырӑттӑмӑр. Унӑн кашни утӑмӗнче чӑваш чунӗн чи лайӑх енӗсем палӑрса тӑрӗччӗҫ, – терӗ.

Ҫыраймарӗ вӑл кӗнекене Иван Мучи. Вӑхӑт тупаймарӗ. Кунӗ кӗске пулчӗ ун.

**Хветӗр Уяр.**